15-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
АВГУСТ
18
ЫТЛАРИКУН
192 (6127) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

В. М. Молотов юлташа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Вячеслав Михайлович Молотов юлташа СССР Совнарком ĕçĕн пур ыйтăвĕсем тăрăх та СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1942 çулти августăн 16-мĕш.

Чугунçул валли çителĕклĕ вутă хатĕрлер

Чугунçул транспорчĕ — паттăр Хĕрлĕ Çарăн тăван пиччĕшĕ, унăн çапăçури çывăх помощникĕ. Транспорт фронта мĕн кирлине вăхăтра тата çителĕклĕ таран парса тăма тивĕçлĕ. Унăн ĕнтĕ те тĕрĕс ĕçĕнчен фронтри ăнăçлăх килет.

Транспорт вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлетĕр тесен, ăна хĕле кĕме лайăх хатĕрлес пулать, ĕçлеме кирлĕ топливăна çителĕклĕ парас пулать. Транспорта кирлĕ топливо шутне çĕркăмрăкĕпе пĕрлех вутă та кĕрет. Вутă — чи нумай, чи йӳнĕ топливо.

Çавна май тата вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пула, транспорт валли кăçал вутă хатĕрлес ыйту тухса тăчĕ. Пирĕн республикăн та çав вутта хахал мар хатĕрлемелле. Республикăра çак ĕç августăн пуçламăшĕнчен вара пырать. Вăрман Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕн данныйĕсем тăрăх, плана августăн 15-мĕш тĕлне хатĕрлес енĕпе 18,8 процент пурнăçланă. Касас тата турттарас енĕпе пăхсан, ĕç хăвăртлăхĕ вăтам пынă пек курăнать, анчах тиесе ăсатас енĕпе вара плана паянхи кун тĕлне пĕр процент та тултарман. Çапла вара, транспорт валли вутă хатĕрлес ĕç республикăра лайăх пырать тесе калама çук-ха.

Вутă хатĕрлес ĕçĕн тĕп ăнăçлăхне районсем ĕç вăйĕ вăхăтра тата çителĕклĕ таран уйăрса пани татса парать. Хальхи вăхăтра вăрмансенче плана пăхнинчен çурран 70,7 процент, лашасемпе 61,3 процент çеç ĕçлеççĕ. Республикăри пĕр район та ĕç вăйне çителĕклĕ чухлĕ уйăрса паман. Уйрăмах ку тĕлĕшпе Пăрачкав районĕ юлса пырать. Августăн малтанхи кунĕсенче кунтан çурран 110 çын ĕçлес вырăнне вăтамран 30—40 çын çеç ĕçленĕ, юлашки кунсенче лашапа пĕр çын та ĕçлемен. Улатăрпа Канаш районĕсенчен те ĕç вăйĕ сахал янă. Элĕк, Çĕмĕрле тата Советски районсене илсен вара, вĕсем ку тĕлĕшпе яланах начар ĕçлеççĕ. Вăл районсенчен янă çынсем вăрманта икĕ-виçĕ кун ĕçлекелеççĕ те каялла таврăнаççĕ.

Районсенчи партипе совет организацисен çакна ăнланса илмелле: транспорт валли вутă хатĕрлесси — оборонăллă пĕтех те пысăк ĕç. Çак ĕçĕн ăнăçлăхĕ ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем ĕç вăйĕ вăхăтра тата кирлĕ чухлех уйăрса панинчен килет. Çавăнпа та асăннă районсем ĕç вăйĕ çителĕксĕр уйăрса парса вутă хатĕрлес ĕçе вăрахла яни çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулать.

Халĕ 1942 çулăн виççĕмĕш кварталĕ иртсе пырать. Августпа сентябрь уйăхĕсем—вăрман ĕçĕнче чи юрăхлă вăхăт: çанталăк ăшă та уяр, кунсем вăрăм тăраççĕ. Çак вăхăтра уйăхри плансене тултармалла çеç мар, тăваттăмĕш промхозĕ виççĕмĕш кварталта вутă хатĕрлес плана срокчен тултарма условисем туса хумалла.

Малта пыракан вăрман пункчĕсем хăйсен умĕнче тăракан çак задачăна çавăн пек ăнланаççĕ те. Вăрнар леспромхозĕ виççĕмĕш кварталта вутă хатĕрлес плана касас енĕпе 21 процент, турттарас енĕпе 28,9 процент тултарнă, Йĕпреç леспромхозĕпе Улатăр леспромхозĕ те начар мар ĕçлеççĕ.

Анчах чылай леспромхозсемпе вăрман пункчĕсенче ĕçе пĕлсе организацилемен-ха: ĕç вăйне тĕрĕс тăратса тухман, ĕçлекенсене социализмлă ăмăртăва явăçтарман, обязательствăсем йышăнман. Çавăнпа ĕç хăвăртлăхĕсем те çителĕксĕр, ĕç тухăçлăхĕ те пĕчĕккĕ, плана тултарасси юлса пырать.

Вăрман ĕçĕнчи тепĕр çитменлĕх вăл—рабочисем пĕрмаях улшăнса тăни. Вăрман хатĕрлекен организацисемпе предприятисен руководителĕсен задачи — ĕç вăйĕ улшăнса тăрассине пĕтересси, рабочисене сезон пĕтиччен çирĕплетсе хăварасси.

Анчах вăрманта ĕç вăйĕ çителĕклĕ пулни çеç мар, вĕсем пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçлени те кирлĕ. Вăрманта ĕçлекенсен пурин те—касакансен те, турттаракансен те, тиекенсен те — нормăна тултарассишĕн кĕрешес пулать. Унпа пĕрлех вĕсен ĕçĕ çыхăнса пытăр: турттарасси касассинчен, тиесси турттарассинчен юлса ан пытăр. Ĕçе кăтартуллă организацилени, механизмсемпе тата ĕç хатĕрĕсемпе туллин усă курни — çаксем вăрман промышленноçĕнчи рабочисен законĕ пулмалла. Уйрăмах çĕршыв вăрман промышленноçĕнчи кадровăй рабочисенчен, механизацилле çулсен работникĕсенчен нумай ыйтать.

Çав вăхăтрах вăрман ĕçĕнчи руководительсен рабочисен культурăпа пурнăç условийĕсем çинчен, вĕсем хушшинче кулленех ĕçлеме—докладсем, калаçусем ирттерме, хаçатсем вуласа пама, стена хаçачĕсем кăларса тăма — кирли çинчен манма юрамасть.

Вăрман ĕçĕнчи работниксем умĕнче пысăк задача тăрать: вĕсен чугунçул транспортне кирлĕ вутта вăхăтра тата çителĕклĕ чухлĕ хатĕрлесе памалла. Çак задачăна чыслăн пурнăçлассипе вăрманта ĕçлекенсен çĕршывпа фронт умĕнчи хисеплĕ тивĕçĕ.

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Совечĕпе СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ чугунçул транспорчĕ çинчи работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти июль уйăхĕнчи итогĕсене туса тухнă. Вĕсем малта пыракан заводсен хисепĕнче Канашри вагонсем юсакан завода (директорĕ Поздняков юлташ, партбюро секретарĕ Сорокин юлташ, завком председателĕ Кисленко юлташ) паллă тунă тата Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне унăн аллинчех хăварма йышăннă.

Çапла вара, çак завод коллективĕ июнь уйăхĕнчи ăмăртура мала тухнипе илнĕ Хĕрлĕ ялава июль уйăхĕнче тунă çитĕнӳсене кура хăйĕн аллинчех тытса хăварчĕ.

Унсăр пуçне ВЦСПС-па Промышленноçăн пĕр Халăх Комиссариачĕ 1942 çулти июль уйăхĕнче государство планне тултарнă тата ирттерсе тултарнă заводсен е палăртнă, вĕсен хисепĕнче Канашри вагонсем юсакан завод та пур.

* * *

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Центральнӑй Совечĕпе Промышленноçан тепĕр Халăх комиссариачĕ унăн системинчи предприятисемпе пĕрлех хутăш производствăллă заводсен июль уйăхĕнчи лайăх ĕçĕсене палăртнă. Çав заводсем наркоматăн заказĕсене лайăх пурнăçланă тата Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш вырăнсене йышăннă. Малти вырăнсене йышăннă предприятисен хушшинче Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ завод (директорĕ Бенский юлташ, партбюро секретарĕ Поддубко юлташ, завком председателĕ Блошенко юлташ) пур. Наркоматсенчен пĕри çак заводăн лайăх работникĕсене премилеме укçа уйăрнă.

ВЦСПС-па СССР Наркоммясомолпромĕнче

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Совечĕ тата СССР Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариачĕ çак наркоматри предприятисемпе хатĕрлев организацисен 1942 çулти июль уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене туса тухнă.

Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариачĕн хатĕрлев организацийĕсенчен социализмлă ăмăртура çĕнтернĕ тата виççĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулнă организацисем хушшинче пирĕн Чăваш республикинчи Улатăрпа Элĕк районĕсенчи хатĕрлев конторисем пур. Вĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçланă, хатĕрлев тĕлĕшпе государство панă плана тата промышленноçа выльăх-чĕрлĕх парас плана ытлашшипех тултарнă, выльăхсене мăнтăрлатас енĕпе те лайăх тĕслĕхсем кăтартнă.

Унсăр пуçне ВЦСПС-па асăннă Халăх Комиссариачĕ палăртнă лайăх ĕçлекен хатĕрлев конторисем шутĕнче пирĕн республикăри Вăрнар районĕнчи выльăх-чĕрлĕх хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен контора пур.

Великобританин Премьер-Министрĕ г. Черчилль СССР Совнаркомĕн Председателĕпе И. В. Сталинпа калаçни çинчен Англипе Совет Союзĕ панă

КОММЮНИКЕ

Мускавра СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталинпа Великобританин Премьер-Министрĕ г. У. Черчилль хушшинче калаçусем пулса иртнĕ. Вăл калаçусенче США Президенчĕн представителĕ господин Гарриман пулнă. Калаçусенче Совет Союзĕ енчен—Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Маршал К. Е. Ворошилов; Англи енчен—Британи Посолĕ сэр А. Кларк Керр, Империн генеральнăй штабĕн начальникĕ сэр А. Брук тата Британин хĕçпăшаллă вăйĕсен ытти ответлă представителĕсем, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн яланхи заместителĕ сэр Александер Кадоган пулнă.

Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле кĕрешекен çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçă тĕлĕшпе чылай решенисем йышăннă. Икĕ правительстви те çак ирĕклĕхшĕн пыракан тĕрĕслĕхлĕ вăрçа пĕтĕм вăй-хăватпа туса пырас, гитлеризма тата ун йышши кирек мĕнле тирание те пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкиччченех туса пырас ĕмĕтпе çунаççĕ.

Пĕр-пĕрне пĕтĕм чĕререн ăнланнипе уçăмлă атмосферăра иртнĕ калаçусем Совет Союзĕпе Великобритани тата США хушшинче çирĕп туслăх тата пĕр пĕрне ăнланни пуррине, çав туслăхпа ăнлану вăл çĕршывсем хушшинчи союзлă çыхăнусемпе пĕтĕмпех килĕшсе тăнине тепĕр хут палăртма май панă.

Тырпул,аш-какай, çĕрулми тата пахча-çимĕçсем фронта боеприпассем пекех кирлĕ!

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(1942 çулти августăн 15-мĕш тĕлне)

Районсем	Кĕрхи тата çурхи пучахлă тырăсене вырнă (процентпа)
Улатăр	45,8
Элĕк	51,3
Вăрнар	55,6
Йĕпреç	46,6
Ишлей	58,7
Калининскн	63,9
Канаш	57,4
Куславкка	53,4
Комсомольски	59,2
Красноармейски	58,2
Хĕрлĕ Чутай	60,1
Кувакино	50,9
Сĕнтĕрвăрри	52,4
Октябрьски	58,6
Первомайски	47,9
Пăрачкав	54,8
Советски	56,7
Сĕнтĕр	55,0
Вăрмар	56,9
Çĕрпӳ	59,6
Шупашкар	59,9
Чкаловски	55,3
Шăмăршă	56,3
Шăхасан	58,9
Çĕмĕрле	57,1
Етĕрне	50,3
Елчĕк	46,6
Тăвай	57,5
Шупашкар хули	48,6
Чăваш АССР--пе	55,4
1942 çулти августăн 10-мĕш тĕлне пулнă	37,4

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ СИЛОС ХЫВАССИПЕ КĔРХИ ТЫРĂСЕНЕ АКАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(1942 çулти августăн 15-мĕш тĕлне)

Районсем	Силос хывнă (процентпа)	Кĕрхи тырăсем акнă (процентпа)
Улатăр	56,3	6,5
Элĕк	50,0	7,7
Вăрнар	44,5	8,2
Йĕпреç	85,5	16,7
Ишлей	71,8	16,0
Калинински	71,6	10,3
Канаш	85,7	22,7
Куславкка	71,3	сведенисем çук
Комсомольски	101,9	15,6
Красноармейски	34,3	12,5
Хĕрлĕ Чутай	77,6	13,7
Кувакино	53,2	11,3
Сĕнтĕрвăрри	91,4	1,3
Октябрьски	46,0	9,6
Первомайски	77,3	4,0
Пăрачкав	81,8	7,7
Советски	61,0	5,5
Сĕнтĕр	66,1	11,1
Вăрмар	83,5	10,8
Çĕрпӳ	60,0	6,0
Шупашкар	86,5	9,6
Чкаловски	81,2	10,5
Шăмăршă	91,1	10,1
Шăхасан	86,8	11,8
Çĕмĕрле	109,5	10,5
Етĕрне	49,3	16,9
Елчĕк	79,7	23,3
Тăвай	83,5	9,7
Шупашкар хули	83,3	—
Чăваш АССР-пе	72,2	11,0
1942 çулти августăн 10-мĕш тĕлне пулнă	69.4	—

Авăн çапса государствăна тырă парас ĕçе васкатмалла

ШАМĂРШĂ. (Телефонпа). Августăн 14-мĕш тĕлне районра кĕрхи тырăсене пĕтĕмпе 6.392 гектар вырнă. Вĕсенчен кĕреплеллĕ çавасемпе 1.279 гектар çулнă, çурлапа—2.325 гектар, жнейкăсемпе—1.514 гектар вырнă. Комбайнсем япăх ĕçлеççĕ. Вĕсемпе пĕтĕмпе те 274 гектар кăна вырса пухнă. Паянхи кун 12 комбайнран 4 комбайн кăна ĕçлет. Çакă вăл чи малтан МТС комбайнсене начар юсаса хатĕрленинчен килет.

Районĕпе мĕнпурĕ 876 гектар çинчен кĕлте турттарса капана хывнă, 413 гектар çинчи тырра çапса пуçтарнă. Çурхи тырăсене вырма августăн 14-мĕш тĕлне 8 колхоз тытăннă. Кунта хăшпĕр колхозсем çуртрисем симĕсрех тесе кĕтсе тăма пăхаççĕ. Кунашкал шухăш-кăмăлсене пĕтермелле.

Уйрăм колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса ĕçлеççĕ. «Юлташ» колхозра Исаева колхозница кĕреплеллĕ çавапа 0,50 гектар çулса хăех çыхса пырать. «Красный пахарь» колхозра Борзова колхозница 0,72 гектар, Е. Мареева колхозница 0,60 гектар çулса çыхнă.

Районăн хальхи вăхăтра кĕлте турттарса капана хывас, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсен хăвăртлăхне ӳстерессишĕн уйрăмах çине тăрса ĕçлемелле пулать

А. СЕРГАЧЕВ,
Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

„Ядро“ колхоз япăх ĕçлет

Советски район августăн 17-мĕш тĕлне мĕнпурĕ 8.973 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă. Çав шутран 763 гектар çинчи тырра çĕмеле хывнă. Хăшпĕр колхоз председателĕсем çĕмеле хывмасăр хăварнă тырă çумăр çусан мĕн пуласси не ăнланасшăн мар. Пуринчен ытла «Ядро» колхоз председателĕн Белов юлташăн кун пирки шухăшлама «вăхăт çук».

Районри ытти колхозсем 529 гектар çинчи тырра çапнă. Нумайĕшĕ хĕрсех ыраш акаççĕ. Районри колхозсем акăнман çĕр лаптăкĕ пĕре те ан юлтăр тесе тăрăшаççĕ. Августăн 16-мĕш тĕлне 717 гектар акнă. Анчах «Ядро» колхоз вара вăрлăхлăх çапма та тин тытăннă.

Уйри тырпулсене пухса кĕртес ĕçре нумай çĕрте кар тăрса ĕçлеççĕ. Ку ĕçе детсадри ачасем те кашни кун виçĕ сехет хушши тухса пучах пуçтарнипе пулăшаççĕ. Пучах пуçтарас ĕçе «Новый путь» колхоз çеç (председателĕ Бычков) организацилемен.

Районри колхозсем итем çине кĕртнĕ тырпула пушартан сыхлас ĕçе начар мар йĕркеленĕ. Анчах «Машина» колхозра ку енĕпе ĕç япăх тăрать. Колхоз председателĕ Майков юлташ итем çинче пушар тухас пулсан, шывсăр сӳнтерме май çуккине аван пĕлет, çапах та итем çинче мĕн пирки шыв çителĕксĕррине калама пултараймасть.

Районра чи кайра пыраканни—«Ядро» колхоз (колхоз председателĕ Белов). Ытти çынсем хĕрсе тырă вырнă чух Белов юлташ эрех ĕçсе çӳрет. Вăл колхоза мĕнле ертсе пынине ялсовет исполкомĕн председателĕ Романова юлташ та курмасть. Ку ялсоветне кĕрекен «Ядро» колхоз çеç мар, ытти колхозсем те пур енĕпе те юлса пыраççĕ

М. ЮХТАРОВ,
Советски райçĕрĕç пайĕн заведующи.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерех тата **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерех районсенче, çавăн пекех тата **Минеральные Воды, Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Пирĕн войскăсем Майкоп хулине хăварнă. Майкопри нефтепромыслăсен оборудованине тата нефтĕн мĕнпур запасĕсене малтанах илсе тухнă, нефтепромыслăсене пĕтĕмпех юрăхсăра кăларнă. Нимĕç фашисчĕсем Майкопа илнипе советăн нефчĕпе усă курма шутланă. Анчах та вĕсем йăнăшрĕç. Советăн нефтне вĕсем илеймен, илеймеççĕ те.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере, августăн 9-мĕшпе 15-мĕш хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, противникăн аэродромĕсем çинче тата зенитнăй артиллерипе персе нимĕçсен 369 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 241 самолет пĕтнĕ.

* * *

Августăн 15-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 çити танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 çити автомашинине, боеприпассем тиенĕ 60 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи пĕр состава çĕмĕрнĕ, 3 пин тонна водоизмещениллĕ транспорта путарнă, противникăн пехотине икĕ батальона çити тата унăн утлă çарне пĕр эскадрона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противника хирĕç оборонăллă хĕрӳллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски стрелковăй полкăн участокĕнче нимĕçсем темиçе хутчен атака тунă. Пирĕн боецсем тăшмана артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе кĕтсе илнĕ. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тӳссе пирĕн оборонăн малти линине савăлланса кĕме пултарнă. Тепĕр участокра пирĕн разведка нимĕç танкĕсен колонни çывхарса килнине тата ун хыççăн пехота пынине палăртнă. Артиллеристсем нимĕçсен çав колонни çине вăйлăн пеме тытăннă та нимĕçсен 14 танкне пĕтерсе тăкнă, темиçе çĕр гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра Н-ски часть противникăн темиçе атакине сирсе пăрахнă тата хăй контратакăна куçса румынсен полкне çапса аркатнă. Çĕршер çынна тыткăна илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Лейтенант Соловьев командир пулса ертсе пыракан стрелковăй взводри боецсем уйрăмах пысăк хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Противник вăйлăн хĕссе пынине вĕсем темиçе сехет хушши чарса тăнă тата 150 гитлеровецран кая мар вĕлерсе пĕтернĕ. Боецсене пулăшма тепĕр чаçран боецсем килсе çитсен, Соловьевăн боецĕсем контратакăна ывтăннă та гитлеровецсене хĕснĕ.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотин атакисене сире-сире пынă. Н-ски соединенин участокĕнче нимĕçсен 9 танкне, 12 автомашинине, 5 орудине, (вĕсенчен 2-шĕ хăйсем тĕллĕн куçса çӳрекенскерсем) пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллерирен тата минометсенчен персе юханшыв урлă каçмалли вырăна çĕмĕрсе тăкнă, тăшманăн пухăнса тăнă танкĕсемпе мотопехотине сапаласа янă.

Минеральные Воды районĕнче тăшманăн йышлă вăйĕсем хĕссе пынипе пирĕн чаçсем тăшмана хирĕç çапăçса çĕнĕ позицисем патне чакнă.

* * *

Воронеж районĕнче противник хăй халиччен çапăçусенче çухатнă оборона рубежĕсене тавăрас тесе атакăсем тунă. Пирĕн войскăсем противникăн çав атакисене сирсе пăрахнă. Донăн хĕвеланăç çыранĕнче противникăн йышлă вăйĕсем наступление куçнă та халăх пурăнакан пункта пырса кĕнĕ. Халĕ çав пунктăн урамĕсенче çапăçусем пыраççĕ.

Пирĕн авиаци пĕр кун хушшинче нимĕçсен 4 танкне, 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен З. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ противникăн И. ялĕнче вырнаçнă гарнизонĕ çине тапăннă. Партизансем нимĕçсен 55 салтакĕпе икĕ офицерне вĕлерсе пĕтернĕ тата штабри документсене тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 269-мĕш пехотнăй дивизийĕн 489-мĕш полкĕнчи поляк-салтаксен ушкăнĕ Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Тыткăна парăннă çынсем пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç войскисем çынсем тĕлĕшпе çавтери пысăк çухатусем тӳснĕ пирки Гитлер çуркуннех поляксене Германи çарне мобилизациленĕ. Пирĕн енне куçнă Н. çапла каланă: «Обер-лейтенант Шреде тата ытти офицерсем пире казармăсенче те, фронтра та: «халĕ ĕнтĕ эсир пурте нимĕçсем. Поляксем урăх çук», тесе каларĕç. Çав тăмсай гитлеровецсем пĕр приказ çырнипех поляксенчен хăйсене пăхăнакан чурасем тума шутланă пулас.

Питĕ хыттăн хуралланине пăхмасăрах 1-мĕш батальонран темиçе кун хушшинчех вырăссем енне 6 çын тарса каçрĕç. Батальон командирĕ поляк салтакĕсене пурне те пухрĕ те: «Юлашки кунсем хушшинче поляксен 6 салтакĕ вырăссем енне куçрĕç. Кун пекех пулсан тата пĕр уйăхран мĕн пулĕ? Эсир пурте вырăссем енне тарса каçатăр пулĕ? Çавăнпа та çĕнĕ приказ пуличчен сире тыла илсе каятпăр».—терĕ. Пиртен хĕçпăшалсене туртса илчĕç те алла кĕреçесем тыттарса çулсем юсама ячĕç. Анчах та тылра пулнă пулин те эпир çапах гитлеровецсен аллинчен хăтăлса тухма пултартăмăр».

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Украинăн оккупациленĕ районĕсенчи халăха вĕлерсе пĕтереççĕ. Николаев хулинче гестаповецсем июлĕн 27-мĕшĕнче нимĕç офицерĕн виллине тупнă пулнă. Çавăншăн вĕсем хулари халăха çĕнĕрен тискеррĕн асаплантарма тытăннă. Гитлерла бандитсем пĕр каçрах 120 çынна ытла арестленĕ те вĕсене хула тулашне илсе тухса пурне те персе вĕлернĕ.

* * *

Польшăри патриотсен партизанла отрячĕ Люблин таврашĕнчи вăрмансенче 100 ытла оккупанта вĕлерсе пĕтернĕ тата чугунçул станцинче горючи эшелонне сирпĕнтерсе янă.

Августăн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Августăн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче, çавăн пекех тата **Минеральные Воды, Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем оборонăллă хĕрӳллĕ çапăçусем туса пынă. Пирĕн соединени хӳтĕлесе тăракан участокра противник, пирĕн оборонăна шала шăтарса кĕме хăтланса, наступление куçнă. Пирĕн боецсем флангсенчен пырса çапса нимĕçсене пысăк сиен кӳнĕ. Нимĕçсен 6 танкне тата 250 автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем нимĕçсен темиçе атакине сире-сире пăрахнă тата хăйсем йышăннă рубежсене çирĕп тытса тăраççĕ. Юлашки çапăçусенче противник пысăк çухатусем тӳснĕ те, халĕ васкасах резервсем куçарса пырать. Пирĕн танксен пĕр подразделенийĕ тăшманăн тылĕсенче рейд туса çӳренĕ. Танкистсем нимĕçсен 2 танкне, боеприпассем тиенĕ 11 автомашинипе 18 лавне пĕтерсе тăкнă, горючи складне сирпĕнтерсе янă тата 100 ытла гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн чаçсем нимĕçсен фашистла войскисен пысăк вăйсен атакисене сире-сире пăрахнă. Пĕр участокра казаксен отрячĕ противникăн ушкăнне, юханшывăн кăнтăр çыранне каçнăскерне, çапса аркатнă. Касса вакласа тата шывра путарса 200 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Минеральные Воды районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç йывăр çапăçусем туса пынă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 3 танкне, 17 автомашинине тата 250 гитлеровецран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брянск фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ. Пĕр участокра пирĕн чаçсем противникăн батальонне çапса аркатнă тата лайăхрах рубежа йышăнса илнĕ. Гвардин старши лейтенанчĕ Жуков командир пулса ертсе пыракан танксен взвочĕ гитлеровецсен оборонине савăлланса кĕнĕ. Танкистсем нимĕçсен 2 минометнăй батарейине, 5 орудине, 1 танкне пĕтерсе тăкнă тата 270 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

Тĕрĕслесе палăртнă даннăйсем тăрăх, пĕр çапăçура, ун çинчен августăн 13-мĕшĕнче пĕлтернĕччĕ, пирĕн чаçсем нимĕçсен 694-мĕш пехотнăй полкне çапса аркатнă. Противникăн, вилнисене шутласан кăна, 1.450 салтакĕпе офи-

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

церĕ пĕтнĕ. Нимĕçсен 75 дзотне, 2 танкне, 15 противотанковăй орудине, 6 кĕпçеллĕ икĕ миномечне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем снарядсен складне, 2 оруди, 2 радиостанци тата ытти хĕç-пăшалсемпе çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче икĕ кун хушшинче пирĕн разведка тăвакан ушкăнсемпе снайперсем, артиллеристсемпе минометчиксем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынран кая мар стройран кăларнă.

* * *

Нимĕç унтер-офицерĕ Конрад Граупнер Венăри госпитальсенчен пĕринче выртакан ефрейтор Гельмут Дитмар патне çак сăмахсенче çапла çырнă: «Ĕнер эпир пĕр çапăçура пултăмăр та танксемпе çынсем нумай çухатрăмăр. Вырăссем пирĕн 5 танка вĕсен экипажĕсемпе пĕрлех тытса илчĕç. Кашни километршăн пирĕн питех те нумай юн тăкма лекет. Пире пулăшма çĕршыв çĕнĕ вăйсем яма пултарĕ-ши? Паян эпĕ пирĕн вилнĕ салтаксене сĕтĕрсе пĕр купана пухнине сăнаса тăтăм. Çакна курнă хыççăн манăн шухăш-кăмăл пĕтĕмпех арканса кайрĕ. Полкра танксемпе салтаксем кунран-кун сахалланса пыраççĕ. 1941 çулта эпир похода танксемпе пуçларăмăр, вĕçлессе вара çав çула çуна çинче вĕçлерĕмĕр. Çакă вăл татах та çавăн пек килсе тухассинчен эпĕ шиклеснетĕп».

* * *

Июль уйăхĕн вĕçĕнче нимĕçсем Орел облаçĕнчи Кокаревка ялне çĕмĕрсе пĕтернĕ. Гитлеровецсем халăха çаратса пĕтернĕ, колхозниксенчен мĕн илме май пулнă çавсене пĕтĕмпех туртса илнĕ. Фашистла ирсĕрсем ялти 12 çынна асаплантарса тата персе вĕлернĕ, вăл шутран 76 çулти Андрей Петрович Качанов тата 8 çулти Коля Моргунов. Гитлерла бандит Путимцева колхозницăн 8 çулти ачине штыкпа чиксе вĕлернĕ. Нимĕçсем колхозниксен пурăнмалли çурчĕсемпе хуçалăхри çурт-йĕрĕсене пурне те çунтарса янă. Вутра 529 кил, 3 шкул, больница тата обществоллă ытти çуртсем пĕтнĕ.

* * *

Гронинген (Голландия) хули çывăхĕнчи чугунçул станцийĕнче пысăк катастрофа пулнă. Нимĕçсен боеприпассем тиенĕ çар эшелонĕ пĕтĕм вăйпа пынă чухне чугунçул çинчи тепĕр состав çине тăрăннă. Çав çул тăрăх поездсем çÿресси чарăнса ларнă.

—◎—

Транспорт валли вута хатĕрлесси—оборонăллă кирлĕ ĕç

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 17-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Механизациленĕ вăрман пункчĕ иккĕмĕш кварталта начар мар ĕçлерĕ. Вутă хатĕрлемелли плана касас енĕпе 121,8 процент, турттарас енĕпе 115 процент тултарчĕ. Анчах пункт юлашки уйăхсенче хăйĕн ĕç хăвăртлăхне чакарчĕ. Уйрăмах чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесси начар пырать. План тăрăх 3-мĕш кварталта 21 пин кубометр касса турттармалла пулсан, августăн 15-мĕш тĕлне 2.124 кубометр касса, 1.515 кубометр çеç турттарнă.

Вутă хатĕрлес ĕç начар пыни районсем ĕç вăйĕ çителĕксĕр панинчен килет. График тăрăх вăрманта куллен 305 çын ĕçлемелле, хальхи вăхăтра 150—180 çын çеç ĕçлеççĕ. Ĕç вăйне уйрăмах Элĕк, Советски тата Çĕмĕрле районĕсем çителĕксĕр параççĕ. Элĕк районĕ хĕлле те сахал парса тăнă, халĕ те 75 çын вырăнне 30—35 çын кăна парать. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ çакна курса тăраççĕ пулин те, тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Тепĕр çитменлĕх—вăрманта ĕçлекенсен ĕç дисциплини кирлĕ вырăнта мар. Хăшпĕр колхозниксем 2—3 кун ĕçлеççĕ те киле таврăнаççĕ. Ĕç кунĕпе те туллин усă курмаççĕ. Çавăнпа та кашни рабочи кунне 2,5 кубометр хатĕрлес вырăнне вăтамран 2 кубометр çеç хатĕрлет.

Вутта тракторсемпе турттараççĕ. Анчах вĕсем те ĕç графикĕ пурнăçа кĕмест. Пилĕк трактортан тăваттăшĕ çеç ĕçлекелеççĕ.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесси—оборонăллă питех те кирлĕ ĕç. Çак ĕçе çителĕксĕр туса пыракансемпе çирĕп кĕрешме пултараймасть.

Х. ЛИСИН.

Пахча-çимĕç параççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Районри колхозсем государствăна пахча-çимĕç пама тытăнчĕç. Ку таранччен Мыслецри «Ударник» колхоз 2.360 килограмм хăяр парса плана ытлашшипех тултарчĕ.

Çавăн пекех Пренешри «Большевик» колхоз 2.011 килограмм, «Заря» колхоз 2.601 килограмм, «Комбайн» колхоз — 1.272 килограмм хăяр панă.

Паянхи куна район пахча-çимĕç памалли плана 50 процента яхăн тултарнă.

Тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртер

Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри колхозсемпе совхозсем хăйсен чи ответлă ĕçне тума — тырпулсене пухса кĕртме тытăнчĕç. 1942 çулта, совет халăхĕ гитлерла заправилсене хирĕç отечественнăй вăрçă туса пынă кунсенче, тырпулла ытти ялхуçалăх продукчĕсене мĕнле пулсан та нумайрах пухса кĕртме тăрăшмалла. Уйхирте ÿстернĕ тырпулсене пĕтĕмпех пухса кĕртмелле, ăна тăккалама юрамасть, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултармалла, çапла Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва апат-çимĕç çителĕклĕ памалла.

Тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте тăкаксене хирĕç кĕрешесси кăçал уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Комбайнсемпе тĕрĕс ĕçлесен, тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте ĕç вăйĕ сахал кирлине тата тăкаксем те сахалтарах пулнине колхозсемпе совхозсем лайăх пĕлеççĕ. Комбайнсемпе ĕçленипе пĕрлех тырă вырмалли çăмăл машинăсемпе пуринпе те усă курмалла, çавăн пекех тырпулсене алăпа та вырмалла.

Тырпулсене тирпейсĕр вырнинчен, кая юлса вырнинчен, тырă вырмалли машинăсене лайăх йĕркелемесĕр ĕçлетернинчен тата ыттинчен те мĕн чухлĕ тырă тăкăнса юлнине пурте пĕлеççĕ. Çавăн пекех çав тăкаксене хирĕç мĕнле кĕрешмеллине те пĕлеççĕ: тырра ытлашши пулса кайиччен уйра тăратма юрамасть, пухăçсене кĕреплепе пураса пухмалла, уборка машинисем çумне зерноуловительсем лартмалла тата ытти те. Кашни колхозрах тата совхозрах тăкаксене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте çав ĕçсене туса ирттермелле.

Анчах тырпула çăмăл машинăсемпе тата алăпа вырас ĕçе темĕн чухлĕ тирпейлĕн туса пырсан та, машинăсем юсавлă пулсан та, зерноуловительсемпе усă курсан та, тырпулсене пухăччен, çавăн пекех вырнă чухне, уйрăмах тырă вăйлă пиççе çитнĕ вăхăтра тырпул çилпе тăкăнма пултарать.

Пĕлсе тăрас пулать: кашни пучахран пĕр-пĕрчĕ ÿксен те, вăтам шутпа илсен, кашни гектарта пĕр центнертан кая мар тăкăнать. Çакăн пек куçа курăнман тăкаксем çине халиччен практикăри ĕçре тата наукăра сахал çаврăнса пăхнă. Тырă тăкăнни тесе уйхирте ытлашши ларнипе тăкăннă тырра тата пухса кĕртнĕ чухне куçа курăнсах тăкăнакан тырра шутлама вĕреннĕ.

Çакăнпа пĕрлех «куçа курăнман» тăкаксем те пур. Çавна ăна пĕр лаптăк çинчи (сăмахран, пĕр гектар çинчи) тырăн пучахĕсене пухса, пучахсенчи пĕрчĕсене шутласа пăхсан курма пулать.

Тырпулсене пухиччен вăхăтра тата тырă вырнă чухне пулакан çакăн пек тăкаксене, пур чухне те куçа курăнман-скерсене, хирĕç кĕрешес ĕç çине ялхуçалăх наукин работникĕсем, агрономсем, çĕрĕç работникĕсем, колхозсемпе совхозсем уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхма тивĕçлĕ. Совет Союзĕн хĕвелтухăçĕнчи облаçĕсенче çав тăкаксене хирĕç кĕрешме йывăр мар, вара кашни пучах пуçне пĕр-ик пĕрчĕ перекетлени 1942 çултах çав районсенче кашни гектар çинчен пĕрер, икшер центнертан кая мар нумайрах тырă пухса кĕртме май парать. Çавăнпа та тырпулсене выраччен тата вырнă чухне пулакан тăкаксене хирĕç кĕрешес пулать.

Тырă тĕшши тулса çитнĕ хыççăн вăл мĕн чухлĕ нумайрах вырмасăр ларать, тырпулăн хăшпĕр пайĕ çавăн чухлĕ ытларах тăкăнса пĕтме пултарать. Çакăн пирки ним иккĕленмелли те çук. Пулса çитнĕ тырра мĕн чухлĕ хăвăртрах пухса кĕртетпĕр, çавăн чухне тырă ларнă çĕрте те, вырнă вăхăтра та сахалтарах тăккаланать.

Пысăк лаптăксенчи тырра пухса кĕртме нумай ĕçлес пулать. **Тырă тăкăннине хирĕç кĕрешес ĕçе татса паракан фактор вăл — тырпулсене ушкăнпех пухса кĕртес ĕçе вăхăтра, пĕр кунлăха та кая юлмасăр туса пыни пулать. Пĕр-пĕр лаптăк çинчи тырра пухса кĕртмелли вăхăта тĕрĕс палăртасси— питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан ыйту.**

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире тырра ушкăнпех çăмăл машинăсемпе тата алăпа вырма тĕшши хытас умĕн тытăнмаллине, комбайнсемпе вырма — тырă пĕтĕмпех пиççе çитсен тытăнмаллине кăтартса панă. Çак питех те паха кăтартăва çине тăрсах пурнăçа кĕртес пулать. Тырра ушкăнпа пухса кĕртме тытăнас ĕçе пĕр кунлăха та кая хăварма юрамасть.

Çĕпĕрте тата Çурçĕр Казахстанра иртнĕ çулсенче тырпулсене çăмăл машинăсемпе пухса кĕртме кая юлса тытăнасси йăлана кĕнĕ пулнă. Çав районсенче тырă тĕшши ытти çĕртисенчен уйрăмах хăвăрттăн хытса çитет, çав вăхăтрах хăмăлĕсем, çулçисем тата пучахĕсем час-часах симĕс пулаççĕ, саралмаççĕ, типмеççĕ. Тул енчен пăхсан тырă симĕс, вырма вăхăт çитмен пек туйăнать.

Тырă пиççе çитнине тĕшшисем тăрăх мар, унăн хăмăлĕ тата çулçисем тăрăх пăхни Çĕпĕрте тата Çурçĕр Казахстанра тырă вырма кая юлнин тĕп сăлтавĕ пулса тăрать.

Тырă пулса çитнине çавăн пек палăртни тĕрĕс мар. Тырпулсем çуллахи вăхăтăн иккĕмĕш талкăшĕнче пулса çитекен районсенче тырă пиççе çитнине çавăн пек майпа палăртни уйрăмах тĕрĕс мар.

Паллах, пучахсенчи тырă тĕшшисем тулса çитиччен вырма тытăнсан тĕшĕ туллиех пулаймасть, унăн тухăçĕ пĕтĕмпех пулса çитнĕ тырă тухăçĕпе танлаштарсан сахалтарах пулать.

Анчах тырă тĕшши тулса çитсе хытма пуçланă пулсан, тырра вырас пулать. Унăн хăмăлĕпе çулçисем типессине кĕтсе тăма юрамасть. Çав тырă ларнă çĕртех типессине кĕтсе тăма кирлĕ мар. Çавăн пек пуçнипе эпир тырра тăкăнма памастпăр.

Паллах ĕнтĕ, комбайнсемпе вырса кĕртме палăртнă участоксенчи тырра типиччен, урăхла каласан, унăн тĕшшисем пĕтĕмпех пулса çитиччен лартмалла.

1941 çулта эпир сĕннĕ тăрăх Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри пушхирлĕ тата вăрманлă-пушхирлĕ районсенче çурхи тулла тĕшши хытма пуçлас умĕн, тырă тĕшши чуста пек чухнех, вырчĕç. Çавăн пек тырпулăн улăмĕсемпе çулçисем симĕсех пулнă, пучахсенчи тĕшĕсенче нÿрлĕх 40 процентран кая мар пулнă. Пур çĕрте те результатсем аван пулчĕç. Авăн илнĕ хыççăн, çавăн пек пухса кĕртнĕ тырпулăн тĕшши чи лайăх тырă пулни, апат-çимĕç тума та, акма та юрăхлă пулни палăрчĕ.

Иртнĕ çулта эпир тырпулсене çавăн пек пухса кĕртме тырăсене кĕрхи тăм ÿкнипе пăсăласран сыхласа хăварас шутпа хушнăччĕ.

Кăçал вара Çĕпĕрте тата Çурçĕр Казахстанра **кĕрхи тăмсем ÿкнинчен пăсăлма пултаракан тырпулсене кăна мар, тăм ÿкме пуçлаччен пулса çитекен тырпулсене те çавăн пек пухса кĕртес пулать.** Çавăн пек тусан тырпулсене массăллăн пухса кĕртмешкĕн иртерех тытăнма, тырпулсене ытлашши пулса каяччен вырма май килет. Çапла тусан тырра вăл уйхирте ларнă чухне тата вырнă чухне тăкăнма памастпăр.

Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри районсенче комбайнсемпе пухса кĕртме палăртман участоксенчи, çăмăл машинăсемпе тата алăпа вырмалли участоксенчи тырпулсене вĕсен тунисем, пучахĕсем тата тĕшшисем типсе çитиччен вырма тытăнмалла. **Тырă тĕшши хытма пуçласанах, чуста пек пулса çитсенех, вырма тытăнас пулать.** Каярах юлса шăтнă тырă пучахĕсенчи тĕшĕсем тулса çитсенех вырма тытăнма юрать тата тытăнмалла та, мĕншĕн тесен çав вăхăт тĕлне ытти тĕп тунасен пучахĕсенчи тĕшĕсем тем тесен те хытма пуçлаççĕ.

Çĕпĕрте тата Çурçĕр Казахстанра вырса тăкнă тырпула типĕтес тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсемех пулмаççĕ. Çĕпĕрĕн пушхирлĕ тата вăрманлă-пушхирлĕ районĕсенче вырса тăкнă тырпула типĕтме çăмăлтарах, çав вăхăтрах çапнă тĕштырра типĕтме йывăртарах.

Колхозсемпе совхозсен иртнĕ çулти опытĕнчен çакă курăнчĕ: асăннă районсенче тĕшши хытма пуçласан вырнă тырă часах типет. Ун хыççăн сыхнă кĕлтесенчен çĕмелсем тăваççĕ, унтан тырра (тÿрех çапма тытăнмасан) капана хываççĕ. Çакăн хыççăн пысăк пахалăхлă тĕштырă пулни, ун пек тырра çапнă хыççăн тепĕр хутчен типĕтме кирлĕ мар пулни палăрчĕ.

Çĕпĕрте тата Казахстанра пысăк лаптăксем çинчен пухнă утта типĕтес ĕç кашни çулах ăнăçлăн иртет. Çакăнтан вара уйхирте ларнă чухне типсе çитмен тырпула вырсан часах типĕтсе çитерме май пурри курăнать.

Тĕшĕ хытма пуçланă, анчах хăмăлĕсемпе пучахĕсем симĕс е симĕсрех тырпулсене сÿлĕрехрен çулмалла. Çулнă тырă çĕр çине мар, юлнă хăмăлсем çине ÿктĕр. Ун чухне вара çулса тăкнă тырă часрах типет. Пăртак типĕтнĕ хыççăн тырра хăвăрт кĕлтесене сыхас пулать те малалла кĕлтесенче тата çĕмелсенче типĕтмелле. Тырпулсем çĕмелсенче типнĕ май вĕсене васкавлăн капана хывма тата çав вăхăтрах çапма тытăнмалла.

Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри районсенче **вăрлăхлăх тĕштырăсен участокĕсене пур колхозсемпе совхозсенче те, вăрлăх хуçалăхĕсемсĕр пуçне, çăмăл машинăсемпе** вырса кĕртме сĕнетпĕр. Кун пек тунипе вăрлăхсене кĕлтесенче тата çĕмелсенче типĕтме май килет. Кун хыççăн вара вăрлăхлăх тырра тепĕр хут авăнра типĕтме кирлĕ пулмасть.

Кашни колхозпа совхоз кăçал тырпулсене çăмăл машинăсемпе ытларах выраççĕ. Çавăнпа та вăрлăх участокĕсене пурне те çăмăл машинăсемпе вырни комбайнсемпе пухса кĕртмелли лаптăка сахаллатмалли сăлтав пулма пултараймасть.

Вăрлăх хуçалăхĕсенче уборкăра комбайнсемпе те, çăмăл машинăсемпе те ĕçлемелле.

Вăрлăх участокĕсене те тулса çитнĕ тĕшĕ типиччен пухса кĕртме тытăнас пулать. Каярах юлса шăтнă тунасен пучахĕсенчи тĕшĕсем хытма пуçласанах, тĕп тунасен пучахĕсенчи тĕшĕсем хытса чуста пек пулса çитсенех çав участоксене вырма тытăнас пулать.

Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри районсенче тырпулсене иртнĕ çултисемпе танлаштарсан çичĕ кун е унтан та маларах тытăннинчен, уйрăмах кăçалхи условисенче, нумай усă пулассии паллах. Анчах колхозсемпе совхозсен хăшпĕр руководителĕсем çакна шута илмеççĕ. Хăмăлсем, пучахсем тата тырă тĕшши тымартан типессине кĕтеççĕ. Хăшпĕр работниксем: тырпула (кунта ырăш пирки сăмах пырать) типиччен лартсан ытларах усă пулать, тесе шутлаççĕ. Çакăн пек шутлани тĕрĕс мар. **Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри пур районсенче те халĕ тырпула çăмăл машинăсемпе, чылай çĕрте комбайнсемпе те хĕрсех вырма пулать.**

Ырăш пухса кĕртме, кĕлтесене типĕтме, вăрлăх валли тата государствăна памашкăн çапма васкас пулать. Вăл е тепĕр колхозра ырăш вырассипе çапассин кая юлнине пула çав хуçалăхра уборкăри ытти ĕçсем вăраха каяççĕ, тырă ытларах тăккаланса юлать.

Тырă хăмăлĕсем тымартах типессине кĕтсе тăмасăр, вăхăтра пухса кĕртме тытăнни вăл — кашни пучахра вăтам шутпа пĕр-икĕ пĕрчĕ сыхласа хăварассине (тăкăнма парас маррине) пĕлтерет. Çакă вара кашни гектартан 1—2 центнер тырă ытларах пухса илме май парать. Кунсăр пуçне çакă вăл тырпулсене массăллăн пухса кĕртессине иртерех туса пыма май парать.

Кĕрхи тăм ÿкнипе пĕтесрен тырпула сыхласа хăварас ыйту уйрăмах çивĕч тăрать. Наукăпа тĕпчев учрежденисен, Çĕпĕрпе Çурçĕр Казахстан облаçĕсенчи колхозсен тата совхозсен 1941 çулти опычĕ çакна кăтартса пачĕ: **çав районсенче тырпулсем пулса çитмен текен сăлтавпа вĕсене сентябрĕн 5—10-мĕш хыççăн та вырмасăр хăварни усăсăр.** Сентябрĕн 5—10-мĕш тĕлне тырпулсем пĕтĕмпех пулса çитмен пулсан та, çав вăхăт çитсенех вĕсене хăвăрт пухса кĕртни хуçалăх тĕлĕшĕнчен усăллă пулать. Çавăн пек тырăсене тăм ÿкиччен лартма юрамасть.

Тен, тепĕр пĕр-икĕ эрне иртмесĕр тăм ÿкмĕ, унччен тырă тĕшшисем ытларах тулĕç тесе шутлани тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен тырă туласси сывлăшри температурăран килет. Талăк хушшинчи температура 10—13 градус ăшă тăнă вăхăтра (сентябрь уйăхĕнче çав районсенче унтан ăшăрах пулмасть) тырă тĕшши туласси, тырă пиçесси питех те вăраххăн пулса пырать. Çав вăхăтра тăм ÿкмесен те тырă тĕшши пăртак кăна хушăнма пултарать, анчах тырра вырман пирки унĕн тĕшши кайран ÿкекен тăмпа та пăсăлать. Пиçсе çитмен тырра тымарта ларнă чухнех тăм тивни тырпулăн пахалăхне тата тухăçне нумай чакарать. Кунсăр пуçне тымарта ларнă чухнех тăм тивнипе пулса çитмен тырпул улăмĕн пахалăхĕ, тăм тивмен тырпул улăмĕпе танлаштарсан, чылаях чакать.

Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри тĕрлĕ облаçсенчи колхозсемпе совхозсен 1941 çулти опычĕ çакна кăтартса пачĕ: сентябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче çулса пухнă, тымарта ларнă чухне тăм тивме паман симĕс тырпулсем авăртма та, хăшпĕр чухне акма та юрăхлă пулнă. Паллах, сентябрь уйăхĕ пуçланнă тĕле пулса çитнĕ хыççăн пухса кĕртнĕ тырпулсен тухăçĕпе танлаштарсан вĕсен тухăçĕ сахалтарах пулнă. Пулсан та, çавăн пек тунинчен усă нумайрах пулнă. Çавăнпа та эпир Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри пур районсенче те, сентябрь уйăхĕн малтанхи числисенчен пуçласа, пулса çитнĕ участоксенчи тырпулсене пухса кĕртнипе пĕрлех, пур участоксенчи тырпулсене те, вĕсем пулса çитмен пулсан та, пĕтĕмпех вырма сĕнетпĕр.

Кăçал, нихăçанхинчен ытларах, тырпулсене ушкăнпе пухса кĕртме вăхăтра, кая юлмасăр тытăнас пулать, вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртмелле, çапмалла, государство умĕнчи обязательствăсене хăвăртрах тултарма пур майсемпе те тăрăшмалла.

Çĕпĕрти тата Çурçĕр Казахстанри районсенче тырпулсене иртерех акнине пула 1942 çулта тырпулсем иртнĕ çултисенчен маларах пулса çитеççĕ. Çапах та, кая юлса пулакан ÿсен-тăрансем акнă пысăк мар çĕр лаптăкĕсене кĕрхи тăм ÿксе сиенлессинчен хăтарма тăрăшас пулать.

1942 çулта кашни гектартан вăтам шутпа 3—4 центнер тырă ытларах пухса кĕртме пулать тата пухса кĕртмелле те. Çавна тума социализмлă ялхуçалăхĕн пур майсем те пур. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене тĕрĕс тата вăхăтра организацилес пулать, ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Академик Т. Д. ЛЫСЕНКО.

Ют çĕршывсенче

Иккĕмĕш фронт тăвассишĕн Англи хĕрарăмĕсем хушшинче пыракан движени

ЛОНДОН, августăн 16-мĕш. (ТАСС). Европăра иккĕмĕш фронт уçассине васкатассишĕн пыракан движени Англире ытларах та ытларах сарăлать. Нумаях пулмасть 80 хĕрарăмран—Англи çарĕнчи салтаксемпе офицерсен арăмĕсенчен, амăшĕсенчен, аппăшĕсемпе йăмăкĕсенчен тăракан делегаци Лондонра пухăннă, вĕсем иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçма ыйтнă тата çав фронта производствăра ытларах вăй хурса ĕçленипе пулăшма шантарса каланă. Çав делегацире работницăсемпе килхуçи хĕрарăмсен 33 пин çынлă йышĕнчен уйăрнă представительсем пулнă. Делегаткăсем хушшинче Лондонри чи пысăк предприятисенче ĕçлекен работницăсем пулнă.

Хĕрарăмсен делегацийĕ премьер-министрĕн заместителĕ патне пынă. Вĕсем хăйсемпе пĕрле иккĕмĕш фронта халех уçма чĕнекен çыру илсе пынă. Делегацие парламент членĕсем Хорабин, Макен тата Ролтет йышăннă. Вĕсем хăйсем енчен пĕтĕмĕшпех çав требованисем майлă тăнине пĕлтернĕ.

Лондонри рабочисем Англи правительствине чĕнсе калани

ЛОНДОН, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче Лондонри 105.000 рабочин делегацийĕ иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтса Черчилле деклараци панă.

Халĕ делегатсем премьер-министр патне иккĕмĕш делегаци яма шут тунă. Лондонри предприятисем пурте çав делегацие хăйсен представителĕсене уйăраççĕ. Августăн 20-мĕшĕнче делегаци премьер-министрăн резиденцине каять.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИ ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 16-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: августăн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕМ ГИБРАЛТАРА ПЫНĂ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Атлантика енчен Гибралтара Англипе Америка самолечĕсем тăтăшах пырса тăраççĕ. Гибралтартан вĕсем Вăтаçĕр тинĕс районĕсем патнелле каяççĕ.

ЕГИПЕТРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 15-мĕш. (ТАСС) Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Египет фронтĕнче ĕнер нимĕнле паллă ĕçсемех те пулса иртмен. Авиаци чылай пысăк активлăх кăтартнине кăна палăртнă.

Августăн 13-мĕшпе 14-мĕшĕнче Англи авиацийĕ, Вăтаçĕр тинĕсри транспорта хÿтĕлесе пыраканскер, малтан илнĕ хыпарсем тăрăх, неприятелĕн 10 самолетне персе антарнă.

Америка войскисем Соломон утравĕсем çинчи аэродромсене йышăнса илнĕ

МЕЛЬБУРН, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Союзниксен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче Америка войскисем Японин Гвадалканар утравĕ çинчи аэродромне, çавăн пекех тата Соломон утравĕсем хушшинчи Тулага утравĕ патĕнчи гидробазăна йышăнса илнĕ тесе шутлаççĕ.

Румынире çынсем хăйсене хăйсем вĕлересси ÿссе пырать

ЖЕНЕВА, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Румыни халăхĕ хушшинче чухăнлăх хăрушла ÿссе пырать. Асапланса халран кайнă çынсем, йывăр лару-тăруран мĕнле тухмаллине пĕлмесĕр, ытларах та ытларах хăйсене хăйсем вĕлерме тытăнаççĕ. Çапла, сăмахран, «Универсул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, июль уйăхĕнче Бухарестра чухăнлăхпа асапланса çитнĕ пирки хăйсене хăйсем 26 çын вĕлернĕ. Хăйсене хăйсем вĕлерекен çынсем хушшинче пуринчен ытларах çамрăк хĕрарăмсем. Çавăн пекех проституципе преступленисем тăвасси вăйлăн ÿсет. Çамрăк хĕрарăмсем—ача амăшĕсем хăйсен тин çуралнă ачисене ют килçуртсен алăкĕсем умне пăраха-пăраха хăвараççĕ.

Гитлерăн Румынипе Венгрири тарçисем хушшинчи харкашусем малалла пулса пыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Пичетре пĕлтернисем тăрăх, Румынипе Венгри хушшинчи отношенисем малтанхи пекех çивĕч тăраççĕ. Румынире венгерсене 5.800 çынна тĕрмене хупса лартнă. Румынири радиопа пичет Венгрие хирĕçле пропагандăна малтанхи пекех хаяррăн туса пыраççĕ. «Курентул» хаçат нумаях пулмасть венгерсене вĕлерсе пĕтерме чĕннĕ, хаçат вĕсене «хăрушă элементсем» тесе ят панă. Икĕ енĕ те малтанхи пекех Румынипе Венгри чиккинче темиçешер дивизи тытаççĕ.

ОККУПАНТСЕМ ГОЛЛАНДИРЕ ЗАЛОЖНИКСЕНЕ МАССĂЛЛĂН ХУПАÇÇĔ

ЛОНДОН, августăн 16-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç оккупанчĕсем юлашки вăхăтра голландецсене 1000 çынна ытла заложник вырăнне арестлесе хупнă. Голландире крушенисем тăвакан çынсем оккупациллĕ влаçсене парăнни çинчен е вĕсене арестлени çинчен Лондонра паянхи кунччен те хыпарсем илмен. Лондонра 700 ытла заложникĕн ячĕсем паллă пулса тăнă. Вĕсем хушшинче паллă педагогсемпе юристсем тата ыттисем те пур.

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Бомбейра нимĕнле пысăк тытăçусем те пулса иртмен.

Калькуттăра полицин йĕркесĕрлĕхсем пуçласа яма хăтланнă халăх ушкăнĕсем çине пăшалсенчен пеме лекнĕ. Мерăсем йышăнса демонстрацие сапаласа янă.

Индин ытти вырăнĕсенче пур çĕрте те лăпкă пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 16-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бомбейра демонстрацисен шучĕ чакса пырать. Çав вăхăтрах Мадраспа Калькутта хулисенче хумханусем вăйланаççĕ. Калькуттăра ĕнер полицин демонстрантсем çине виçĕ хутчен пăшалсенчен пеме лекнĕ. Çавна пула темиçе çын аманнă. Хумханусем çавăн пекех тата Канпурпа Рабалцинди хулисенче те пулса иртнĕ.

Бомбейра полици хула совечĕн икĕ членне арестленĕ. Вĕсем конгресăн вăрттăн движенине пуçарса пынă тесе шутлаççĕ. Конгрессистсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Англи влаçĕсене хирĕç тăмалли кампани августăн 24-мĕшĕнче пуçланмалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Срочно требуются: инженеры, механики, электромеханики, слесаря, экономисты, бухгалтера, счетоводы, зав. хозяйством, телефонистки, мастер под'ездных путей, рабочие квалифицированные и неквалифицированные, работники охраны.

За справками обращаться: Чебоксары, ул. Байдукова, 8, отдел кадров, телефон 3—83.

С мельницы д. Тюмерево, Янтиковского района, пропала лошадь. Кличка—«Машка». Темно-игреневой масти, ростом 150 см.

Знающих просим сообщить правлению колхоза им. Чкалова, Тойсинского сельсовета, Чкаловского района.

ВСЕСОЮЗНЫЙ ЗАОЧНЫЙ ФИНАНСОВО-ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ НАРКОМФИНА СССР (ВЗИНО)

производит прием студентов на 1-й курс.

В институт принимаются лица, имеющие законченное среднее образование.

Обучение происходит ЗАОЧНО, без отрыва от производства.

ВЗИНО имеет два факультета:

1. Финансово-кредитный — по подготовке экономистов-бухгалтеров и экономистов-кредиторов.
2. Учетно-экономический — по подготовке экономистов-бухгалтеров по учету в промышленности.

Срок приема заявлений — 31 августа.

Заявления о зачислении направлять (лично или почтой) Казанскому филиалу ВЗИНО.

В филиале можно получить подробные правила приема.

К заявлению о приема необходимо приложить: подлинный документ об образовании; автобиографию; справку с места работы; справку о состоянии здоровья; три фотокарточки; справку об отношении к военной службе (для военнообязанных).

Студентам ВЗИНО предлагается сообщить Институту свой адрес для высылки учебного материала.

Начало занятий с 1 сентября.

Адрес ВЗИНО: Москва, центр, ул. Куйбышева, 9.

Адрес Казанского филиала—гор. Казань, ул Бутлерова, 4, ВЗИНО.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1350 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.